Яков УХСАЙ

# КУН КЁНЕКИНЧЕН

## ИЮЛЬ 1970

**20.** Чăвашсем выльăх-чĕрлĕхе, йыт-качкана вырăс ятсем параççĕ. Ĕне — Машша, йытă — Мальчик.

Турă хăми — икона.

**25.** Чулçырминчи Елизар тин авланнăччĕ, хăлхасăртарахчĕ. Пур ĕçе те ăстаччĕ, вырмалли кивĕ машинăна тўрлететчĕ, çĕлен шăтăкĕ умне мăйкăç хурса çĕлен тытнăччĕ. Çĕлен яка-çке!

Çурхи шыв тапса тухать те çыранта шăнăçаймасть, ăна çĕмĕрет, хăй сарăлса каять. Поэзи те тăвăллă вăхăтра ĕлĕкхи формăсене пăхăнмасть.

Эпĕ конструктивистсемпе аташнă чухне «Инженер» сăвă çырнăччĕ. Инженер çурт лартса панă, çурçĕр вăхăтĕнче урамра çўрет... Хваттерĕ çук.

**28.** Ĕнерултă сехетрех çывăрма выртрăм, вунпĕр сехетре вăранса кайрăм, çĕрĕпех машинкăпа шаклаттартăм. Çанталăк çаплах уяр. «Силпи енчи çилсем». Ку япала ытла вăрăмланчĕ.

Сăра ăшăра пăсăлса шăркаланасран ăна хĕлле юр айне лартаççĕ.

Япамсар — арçын ячĕ, Çĕнĕ Ситек ялĕ.

Йăлттин-ялттин сикрĕмĕр, ял йыттине тытрăмăр.

**29.** Пилĕк сехетре тăтăм. «Силпи енчи çилсем». 2011 çул çуралмалли поэт патне çыру çырасси пирки шухăшлатăп.

Улька ялтан çырать: Мана така та, чăхсем те кĕтеççĕ тет.

**30.** Çĕрле вăрах çывăраймарăм, çичĕ сехетре вăрантăм. Тапак нумай туртнипе ăшчик пăвăнать. Çанталăк тĕтреллĕ, сывлăм. «Силпи енчи çилсем».

Лекклес — пĕчĕк чĕрес, ĕççĕр çапкаланса çўрекен çын.

Ленкер — улăм витнĕ çурт çине урлă пушăтпа çыхса хураççĕ.

Пĕр çын хăй кўршине вăрра кĕртесшĕн пулнă. Тавлашсан-тавлашсан пĕри: Лаша урлă пуртă тытăр тет. Лешĕ: Юрĕ, юрĕ, тытăпăр тет. Лашана илсе тухрĕç те каçанĕ урлă пуртă тытрĕç. Çак çын чăнах та утă çулса кайнă пулсан, лаши вилмелле пулнă. Анчах вилмерĕ. Утта вăл çулман, такам ют çын çулса кайнă.

Лаша урчи — холка, лашан малти ури тĕлĕнче çўлĕ тăракан вырăн.

## АВГУСТ

**1.** Лена ĕнер Шупашкара кайрĕ. Паян çиччĕре тăтăм. Эпĕ Шупашкартан июлĕн 9-мĕшĕнче килнĕччĕ, вуннăмĕшĕнче 100 грамм эрех ĕçнĕччĕ. Унтан вара сыпса курман. Паян çанталăк уяр. «Силпи енчи çилсем».

Мунча такмакĕнчен. Йўççи тула, тутли шала пултăр! Пĕр çĕлĕкĕн хĕрĕх саплăк (мунча чулĕ). Про хороших музыкантов говорят, что они научились играть в бане.

**2.** Пилĕк сехет çурăра тăтăм. «Силпи енчи çилсем». Лена хуп-хура çĕрле çумăр айĕн Шупашкартан килсе çитрĕ. Паттăр.

**3.** Ултă сехетре тăтăм. Вырсарникун. Çынсем канаççĕ. Манăн 100 йĕрке çырмаллах. Çанталăк пĕлĕтлĕ.

Чупĕк чăмланипе çу тухмасть.

Çăкалăх витĕр юр çăвать (çăнăх аллани).

Чувашский материализм: Ҫăкăр хырăм хыҫҫăн ҫӳремест, хырăм ҫăкăр хыҫҫăн ҫӳрет.

Ҫын килсен, ҫынна ҫăкăр лартмасăр яни аван мар. Нехорошо не накормить человека (мораль, этика *чувашская*).

**4.** Хам ҫулса пуҫтарнă утта сутмарăм, Мухинсене-тухатмăшсене патăм. Паян иккĕш те килсе тухрĕҫ, сутса яма ĕлкĕрнĕ. Унччен никам та илекен ҫук тесе ҫӳретчĕҫ. Арăма ҫаксем хăйсен ҫăткăнлăхĕпе вилĕм патне сĕтĕрсех ҫитерчĕҫ.

Пĕр хĕр пулнă. Вăл ҫумăр чухне чӳрече умĕнче тăнă, ăна аҫа ҫапнă ятсăр пӳрнинчи ҫĕрĕрен. Хĕре ырă вилĕмпе мар, шуйттанпа ҫыхăннă тесе масар тулашне пытарнă.

**5.** Ҫирĕк юпа пултăм та, уй юпине юрарăм. Ҫирĕк турта (Хурамал ялĕ). Так называют вспыльчивого человека. Кăшт каласанах ҫиленетчĕ.

Чĕкеҫ. Чĕкеҫсем вĕҫеҫҫĕ ҫӳлелле, ҫуначĕ тĕкĕсене хытарса.

Кăткă ҫунатласан, ҫумăр пулать.

Пăха-тăрах чĕппе тыттарса ятăм.

Паян ман пата К. М. Мастеровпа Никифоров (Куславкка райкомĕ) килсе кайрĕҫ, Вороновскипе Ислюков хушнипе килнĕ. Пысăк ҫынсем, ăслисем мана манса каймаҫҫĕ иккен. Вĕсене тавах. Паян 100 йĕрке ытла ҫыртăм. Вăй пур, ватăлмастăп. Эпĕ сывă та тĕреклĕ. Арăм халĕ тем пекех савăнĕччĕ.

**6.** Мунча кĕтĕм. Ҫапăнтăм. Вăй пур иккен.

**7.** Ĕнер, виҫĕ сехет ҫурăра, апат ҫисенех выртрăм. Паян тăватă сехетре вăрантăм. Эпĕ ҫапла вара 13 сехет ҫывăрнă, кăшт-кашт вăранкаланă та каллех ыйха ҫапнă. Сăвă ҫырсах ҫаплах ывăннă-ши? «Силпи енчи ҫилсем». С. М. Ислюковран ҫыру илтĕм, эп тăрсанах ҫыру пӳрт умĕнче пăлтăрта выртнăччĕ. Тавах ырă ҫынна! Паян машинкăпа пичетлерĕм.

**8.** Ҫĕрле шухăша кайса выртрăм, нумай туртрăм, паян ултă сехетре тăтăм. Ҫанталăк уяр. «Силпи енчи ҫилсем».

Сарăмсăр чăх та пăсарать.

Шĕкĕ ҫăнăх. Пĕчĕк ачасене пĕҫ хушши, хул хушши-мĕнĕ пиҫсе кайсан, шĕкĕ ҫăнăх сапаҫҫĕ.

Ватă ҫынсен калавĕ харам ҫĕрте выртман теҫҫĕ. Апла эппин, калав кахалсенчен тарнă. Харамса. Ҫăкăр харамси. Тăваттăн тӳн-тӳн, пĕр харамса (лаша).

Тырă выраҫҫĕ. Паян 105 йĕрке ҫырнă. Шăматкун. Улттăра тăтăм. Ҫанталăк уяр. Ҫумăр йĕри-тавра кĕрлерĕ, аслати аватрĕ, анчах ҫумăра Атăл туртса илчĕ, кунта кĕртмерĕ. Кунта яланах ҫапла. Ҫумăра тытса тăракан вăрмансем ҫук.

Хырăм ыратнă пирки эрех ĕҫме сăлтав тупрăм. Ҫĕр ҫăттăр ăна! Вăл эпĕ ĕҫмен вăхăтра хакланнă иккен.

**12.** Вак-тĕвек сăвăсене тӳрлетсе ларатăп. Хырăм ыратать, апат анмасть. Ялта пĕр уйăх пурнатăп, йăлăхтарса ҫитерсен те тӳсмеллех. Хулара ĕҫ алă патне пымасть. Элек итленипе вăхăт иртсе каять. *«Силпи енчи ҫилсем».*

Нумай паллакан ҫынна пакăлти, тăваттуй теҫҫĕ. Ҫĕрле ҫывăраймарăм, тапак туртса хăшкăлтăм.

**15.** Виҫĕ сехет ҫурăра тăтăм. Тĕттĕмччĕ. Ҫанталăк уяр. Машинкăпа шаккаса лартăм. Райком секретарĕ Анатолий Михайлович Леонтьев килсе кайрĕ, ҫурта туса пĕтерес пирки килнĕ. Ăслă ҫын пек туйăнчĕ. Мунча кĕтĕм.

**16.** Йĕпхӳ ҫумăр. Ватăлатăп иккен. Ĕнер мунча кĕрсен те ҫурăм шăмми шак хытса тăчĕ, авăнма памарĕ. Ку — ҫумăра пулнă иккен. «Силпи енчи ҫилсем».

Пять чувств. Поэт владеет всеми. Художник, например, не может передать нюх, орган обоняния. Городские жители, одуревшие от всякого запаха, не чувствуют прелесть запаха природы.

**Эпиграф «Утă уйăхĕ»**
Кăркка пекех карăкĕ,
Кăвапаран курăкĕ.
Шелепи.

Кивçен пани шăши пулса тухса каять, упа пулса пырса кĕрет. 80 йĕрке çыртăм. Çырусем кĕтрĕм. Приемник те çук. Хаçат вуламастăп, ним те итлеместĕп, шăтăкри упа пекех пурăнатăп.

**17.** Тăвата сехетре вăрантăм.

Çанталăк мĕнле пуласси паллă мар. Сулхăн. Çумăр çĕрле тўпене тасатса кайнă. Пирĕн литературăра аслатиллĕ çумăр кирлĕ, çўп-çапсем нумай. «Силпи енчи çилсем».

Н. Янкас партие кĕнĕ, хăй арăмĕпе харкашса кайсан, хăйне вăл партинчен кăларма ыйтса çырнă. Ытла нумай калаçма юрататчĕ, пĕр сăмаха каласа пĕтериччен теприне тытăнатчĕ. Вăл усал çын марччĕ. Ăна хуптарчĕç вăрçă вăхăтĕнче.

**Земля.** Много слов о ней, а написано очень мало хороших произведений.

Çанталăк пĕлĕтлĕ. Йытăсем те вĕрмеççĕ, автансем те авăтмаççĕ. Пурте тутă. Совхоз тăрантать. Кураксем çеç кар-карлаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене пенси памаççĕ. Хăйсен ирех тăранмалла. Халăх кахалланса ĕçрен сивĕнет, çавăнпа çамрăксем хушшинче имшеррисем, чирлисем нумай. Пĕр йăпанчăк — футбол.

«Силпи çилĕсене» вĕртертĕм те çырса пĕтертĕм. «Вут чĕлхе». Ăна 1938 çулта Ульяновскра шухăшласа хунăччĕ, Пушкинăн «Пророкĕ» пек çырас тенĕччĕ. 1937 çулхи хĕстерĕве хирĕç мĕн те пулин каласшăнччĕ.

Паян 92 йĕрке çыртăм, автобиографи «Манăн пурнăç калавĕ» çырма тытăнтăм. Кăнтăрла кунти Иллер варĕнче кăмпа татса çумăр айĕнче çўрерĕм, лўшкенсе çитсен, шăлавара хывса пăрахрăм та тăвата сехет çывăртăм.

**18.** Нумай шухăш килнипе, ытла тăрăшса ĕçленипе тата кăнтăрла çывăрнипе çĕрле çывăраймарăм.

Эпĕ Пишпулекре вĕреннĕ чухне, Дм. Вас. Григорьев вĕренекенсене тетрадь валеçсе паратчĕ, халăх юррисене, сутмалли юмахсене, ахаль юмахсене те çыртаратчĕ. Эпĕ ăна пĕр тетрадь çырса панăччĕ. Ăçта чикнĕ-ши вăл?

Сысна тесен — шăрту çук, йысна тесен — сăну çук.

Эпир Пишпулек МТС-че кахалсен конференцине тата ватă çынсен конференцине ирттернĕччĕ. С. А. Леонтьев, Н. Я. Золотов. Эпĕ унччен суккăрсен конференцине ирттернĕччĕ, «Коммунар» хаçатра çырса кăларнăччĕ.

**19.** Тĕлĕкре Твардовские хăйне мар, унăн сăввине курнă. Вăл унта мана та асăннă пек. Виçĕ сехет çурăра вăрантăм. Çанталăк лăпкă, пĕр çулçă та хускалмасть. «Вут чĕлхе». Яланхи пек тапак туртатăп та çăра чей ĕçетĕп. Лена Шупашкара кайрĕ — Мускава 30-мĕшĕнче вĕçме билет илмелле. Çанталăк йĕпенсе тăмасть, сивĕ. Вут хутрăм. Паян ĕç ĕнерхи пекех ăнса пычĕ: сăвă — 80 йĕрке, проза — 8 стр.

**21.** Çичĕ сехет кăшт çитейменччĕ. Тăтăм. Хĕвел. Ăшă.

Екки ярсан, Екким пек.

**Кĕнтĕм** — свидетель.

Кĕнтĕк, урапа кĕнтĕкĕ. Сердечник.

Ĕç паян ĕнерхинчен сахалрах пулчĕ. 78 йĕрке. Çĕрле начар çывăртăм, кăнтăрлахи ыйхă пуçа тĕксĕмлетрĕ. Хура кураксем панулмисене çиеççĕ иккен. Эпĕ вĕсене сăтăрçă теменччĕ. «Вут чĕлхе».

**22.** Çыру — К. Мастерова.

...Эпĕ сан патна çырса варланă хут татăксене ярса паратăп. Эсĕ

килнипе екки ярсан, эпĕ 82 йĕрке çырнă. Ял совечĕ ку хут çине «Верить сему» тесе пичет пусмасан та ĕнен эсĕ.

Кăткă пек ĕçлекен,
упа пек пĕччен
пурăнакан Я. Ухсай.

**24.** Тăхтаман ватă-и? Унăн пиччĕшĕ, Сетнер ашшĕ. Тăхтаман ватă мар. Элмикассинчи пĕр çын пăхма илемлĕччĕ (сарă мăйăхлă австăватăп).

Анекдот: Сталин (туяннă) сысна пуçĕ 3 тенкĕ, Хрущев — 2 тенкĕ, Брежнев — 1 тенкĕ. Сталин илнĕ пуçăн мимми те, чĕлхи те пур, Хрущевăн чĕлхе çеç, Брежневăн — пуç шăмми кăна.

Сăвăсем: «Хурăнсем» — пĕтертĕм, «Тумра» — кăшт юлчĕ.

Кураксем панулмисене пĕтереççĕ. Сăхса шăтараççĕ те ӳкереççĕ. Паян икĕ витре пухрăм.

**25.** Вăрмантан вăрăм, курăкран лутра (сутмалли юмах — çул.). На язык башкирских чувашей, вернее, на диалект, оказали влияние татарский и башкирский языки (больше), чем русский. На вирьялский диалект — марийский. Анатри — татарский и русский. Бывшие Казанская и Симбирская губернии. Русское влияние — салат, солод. Топонимические названия в Башкирии, в Чувашии. Козловский район. Сам черт не разберет. Елчĕк. Байгулово — Куснар. Владычество Золотой Орды. Паранкă — беренге.

Ыйхă килмест. «Пир çиппи» сăвă сапаланчăк, чăмăртанма пĕлмест. Ăна Шиллерăн «Песнь о колоколе» пек тăвас килет. Ĕç, вăрçă, лăпкă пурнăç.

**27.** Ачалăх — ылтăн кăшкар, пĕртак ӳссе çитсен — шухăш çăмхи. Волков — мĕншĕн? Геннадий Никандрович, хăй йăваш пек те, аван пек те пулсан та хушамачĕ Волков. Туссемпе кăвакарчăн пек, тăшмансемпе кашкăр пек пул! Паян Лена вăрах çывăрать. Ĕнер кĕпе-йĕм çуса ывăннă. Ача ĕçчен те ăслă. Суйма юратмасть.

**28.** Пĕр çурăра тăтăм. Тăвată çурăра тул çутăлма тытăнать. Ĕлĕкренех эпĕ кĕре юрататтăм, хăнк те тумастăмччĕ. Халĕ кăкăр шăнать. Эпĕ, ăна çак пӳртре хĕлле шăнтса, пăсăлнă. Нумай çыртăм, укçи харамсах кайса пычĕ. Арăм укçа тытма пĕлмерĕ... салатса пурăннă.

В 1937 году чебоксарские сверхумники запретили национальный праздник Акатуй. Надо мне просмотреть книгу «Акатуй» Элле.

## МАЙ 1971

**11.** Паян питĕ нумай çывăрнă. Ĕнер Ольга Шупашкартан таврăнчĕ. Паян улма лартрĕç. Кунта каларăшле, паранкă, тутарла беренге. Улма тутарла алма, яблоко. Чĕлхесем питĕ пăтранса кайнă. Питĕ ĕçлесчĕ, анчах халлĕхе сукмак çук, пултарулăх çулĕ çине тухма йывăр. Çанталăк сивех мар, хĕвел хăяккăн пăхать. Çĕрле тĕлĕкре Маяковские куртăм. Нихçан та вилнĕ поэтсене тĕлĕкре курманччĕ. Пуç пăртакçă урмăшнă-тăр.

**19.** Йăрансем тăватăп. Ĕнер çумăр çуса иртсе кайрĕ. Паян хĕвеллĕ çанталăк. Каç сивĕтрĕ, алă ĕç патне пымасть-ха.

**20.** Йăрансем чаврăм. Вăй пур, анчах ĕлĕкхи пек мар, имшер. Ольга чирлет. Çырма тытăннăччĕ те шухăш хыççăн шухăш килет, пурнăç хăратать. Пĕрремĕшĕнче Мускавра пулмалла, Пушкин уявне Михайловское ялне тухса каймалла.

**21.** Эрнекун. Хĕвеллĕ кун. Ĕçлес тетĕп те, сукмак та, йĕр те тупаймастăп. Ĕлĕкхи сăвă пуçламăшĕ:

Эпĕ тепĕр эрнерен
Мускава каяс чухне
Шурăях катанпиртен
Асăнмалăх эс, анне,

Тĕрĕлерĕн ман валли
Тĕлĕнтермĕш питшăлли.

## ИЮЛЬ

**12.** Ĕнер ĕçлеме тытăнтăм. Хуллен пырать. Паян çанталăк уяр. Эпир халăх чĕлхи тетпĕр. Анчах халăх хушшинче чи айван калаçусем пулаççĕ. Эсĕ пĕр-пĕр ăслă çыннах: — Тĕрĕс, — тетĕн. Вăл сана: — Кăмака çинчен кĕррĕс! — тет.

**14.** Паян нимле хыпар та çук. Хăмла çырли татрăм, ĕнер кăмпа тухнăччĕ. Каçхине çумăр.

**15.** Ĕç хуллен пырать, вăхăт Ленăпа та Андрейпе кахалла иртет. Мухинсен виçĕ кушакĕ те столовăй умĕнче лараççĕ. Пĕр кушак паян манăн кантăк умĕнчех кайăк тытрĕ. «Пишпулекри çуркунне». Çанталăк уяр.

**16.** Иртнĕ çĕрле шухăша кайса ирччен çывăраймарăм. Вунпĕр сехетре тăтăм. «Йытă тирĕнчен çĕленĕ çĕлĕк». Эпĕ ку вăхăтра музыкăсăр çырма пултараймастăп. Эпĕ халĕ Бетховена итленĕ чух чун вăранчĕ, çĕнĕ сăвă çуралчĕ.

**18.** Вырсарникун. Пасар. Лена какай шыранă, тупайман. Эпĕ сакăр сехетре тăтăм. Çанталăк уяр. Чӳрече умĕнче çерçисем чĕриклетеççĕ. Пур чĕрчунăн та савăнăç. «Çĕлĕке» çырса пĕтермелле. 120 йĕрке.

**22.** «Урхамах» сăвă валли — «Çумăра хирĕç тăракан лаша кукелет. тет». Лăнкăрт шыв ĕçет.

**23.** Эрнекун 5.30. Эп тăнă-тăманах Вяземский «Тройки» хаваслăн янраса кайрĕ. «Едет к любушке своей».

«Пишпулекри çуркунне».
Издревле сладостный союз
Поэтов меж собой связует.
Пушкин.

**29.** Вăхăта пĕлместĕп.Ултă сехет пуль. Кун хĕвеллĕ. Ытла вĕри мар. Татрăм хăмла çырли те, чие те. Каçпа çанталăк сулхăнланчĕ, пĕлĕтленчĕ.

**Хурăнай** — подберезовик.

**Ама хурăн** — березка с сережками, содержащими семена.

**Суймалли юмах** — чĕчĕ:

Пĕр пĕрене çинче икĕ пăчăр ларĕ.

**31.** Сухал пекки — бритва.

Суху çын — косноязычный.

Утă уйăхĕ иртсе кайрĕ. Поэмăна çырса пĕтерейменрĕм. Паян 120 **йĕрке.**

## ÇУРЛА УЙĂХĔ — АВГУСТ

**1.** Ĕлĕкхи календарьпе халĕ çурла уйăхĕ мар, утă уйăхĕ. Ĕлĕк тырра каярах акнă, вырма та каярах тухнă. Кăçал çанталăк питĕ усал, шăрăх чух ытла шăрăх, сивĕ чух ытла сивĕ. Хĕл сивĕ килет-тĕр. Юр иртерех ларсан сывлама çăмăл. Çемук пиччепе Ванькка килсе кайрĕç, Тутар кушак аçине тытса тилмĕрсех ыйтрĕç. Алхасса çитнĕ кушак, вăрман кушакĕ — рысь пекех пулса кайнă, ман пата пырса кĕмест, чăх тытса пĕтĕм ялĕпе çӳрет. 120 йĕрке.

В чувашской литературе. 1. Баре, деньголюбы, чиновники. 2. Кучера. 3. Ломовые лошади. 4. Литфондоеды.

Мою творческую жизнь и кровь всегда портили чиновники, обкомом посаженные в редакциях, издательствах и Союзе писателей. Заставляли переделывать произведения по минутному веянию времени. Когда появи-

лись какие-то установки по отношению к Америке, бездарный тип задержал мой роман «Акăшкӳл», заставил выбросить хорошую сатирическую главу об американских корреспондентах. Мои произведения «Перевал» и «Дед Кельбук» подвергались разгрому везде и всюду, в печати и на собраниях. «Перевал» вышел на русском языке, только тогда издали его на чувашском языке, когда Москвой это произведение было выставлено на Сталинскую премию.



*Я. Г. Ухсай*

Сутмалли юмах. Ашшĕ тӳрĕ, амăшĕ — кукăр, хĕрĕ начаркка, ывăлĕ — хаяр. **Хăмла.**

Улăхсенчен хăмлисем **автан** пуç пек пулатчĕç. Шелепи.

Хăшĕ-хашĕ тата ача çуралсанах, пурăнтăр тесе, сулахай хăлхине шăтараççĕ тет.

Пĕр-пĕр райком секретарĕ çинчен пĕр урлăрах тĕрĕс сăмах çырсан, пирĕн критиксем сиксе тăраççĕ, виçĕ хут кăшкăраççĕ: Элек! Элек! Элек! Ĕлĕк, патша вăхăтĕнче идеологи йĕрне, хальхи секретарьсем пекех, илсе пыракан пупсем çинчен мĕн çеç çырман! Çырма юранă.

**2.** Паян 120 йĕрке.

Çумăр халĕ ăшах та, сивех те мар; пĕр тăтăш вĕтĕ тумламăн пĕрхĕнтерсе çунă чух чăваш савăнать: çĕрулми шултра та тутлă пулĕ.



*Алексей Талвир, Яков Ухсай, Петĕр Хусанкай*



*Я. Ухсай чăваш писателĕсен Союзĕнчи елкăра*

**3.** Тăватă сехет çурăра тăтăм. Çанталăк лăпкă, чӳрече умĕнче чие йывăççисен турачĕсене çил кăшт хускаткалать. Кăнтăрлаччен анчах çыртăм, кайран чие татрăм, вуларăм, хĕвел аниччен нех çывăрма выртрăм.

**140 йĕрке.**

**4.** «2001 çул» сăвă валли.

Чечек ялан хĕвел енне çаврăннă пекех, пăхатăп эпĕ малашлăх енне.

Кăнтăрла питĕ хытă çывăртăм, тăватă сехетре вăрантăм. Приемник хăшпĕр чухне вăранса илет.

**Тарăн шырлан** — обрыв.

**134 йĕрке.**

**5.** ... Нагрянули сегодня Ислюков, секретарь Козловского райкома Леонтьев и председатель райисполкома. Ислюков говорил, что дом надо достроить к ноябрю, к дате моего 60-летия.

Тухрăм кайрăм çулпала,
Хуп-хура çĕлен тĕл пултăм,
Тытрăм та çатăрласа
Шĕлепке кантри явтартăм.

**Халăх юрринчен.**



*Я. Ухсай, В. Исаев*

**Шĕштĕрлĕк** — стерлядь, ҫавах пăчкă пулă.

**140 йĕрке.**

**«Чĕкеҫ инке»** валли:

Вилнĕ ҫынна ҫӳлĕ тупăка вырттарсан, ун сулахай аллине тупăлха, вăл пулмасан, хыт-хура е хĕрлĕ эрĕм тыттараҫҫĕ. Вăл патака акă мĕншĕн тыттараҫҫĕ: ҫынна пытарсан, ун патне шуйттансем пырса сырăнаҫҫĕ, вилнĕ ҫын вара шуйттансене хăй патĕнчен тупăлха патакĕпе хăваласа ярать тет. Тупăлха — таволга, очень жесткое дерево, даже, говорят, оно в воде тонет.

**6.** Ҫичĕ сехетре тăтăм. Ҫĕрле ҫитмĕл ҫичĕ тĕрлĕ шухăш килсе кайрĕ. Ҫывăрма выртсанах шухăшлама кирлĕ мар. Паян ир ҫап-ҫутă хĕвеллĕ пулсан та сулхăнрах. Ҫĕрле анкă-минкĕ шухăшланипе пуҫ мими куҫса ҫӳрекен хăйăр пек йăш-йăш тăвать, хушăран шавласа та илет. «Пишпулек калавĕпе» йăлăхрăм, хама тăлласа лартнă пек вĕҫне тухаймастăп.

**Авăк** ҫил, авăк ҫын, авăк ҫилĕллĕ — вспыльчивыи, кратковременный.

Авăк кайăк — шăши.

Авăнҫи — время молотьбы.

Паян питĕ хĕнпе ĕҫлерĕм, йĕркепе йĕрке ҫыхăнса пымарĕ.

Хĕвел анса ларас патне ҫитрĕ. Паҫҫи туяланса кĕвентепе пырать, икĕ витрепе те шыв туллиех ăснă. Вăл 88-та.

**7.** Ĕҫлесе ларнă чух пуҫ кĕрлесе тăрать. Нумай ĕҫленипе, çăра чей ĕҫнипе, сигарет пĕрмай туртнипе-ши?

Старая черемуха перед своей кончиной буйно цветет, умирает она стоя. Поэт должен умереть сидя за письменным столом. Видимо, такое вдохновение происходит сейчас и со мной.

Кăнтăрла иртсен ҫырмарăм, чие татрăм, кирлĕ-кирлĕ мар ĕҫсемпе вăхăт ирттертĕм.

**8.** Эпĕ ҫывăрса каяс чухне ҫумăр шăпăртатни илтĕнчĕ. Ир кăшт тĕтреллĕ. Ҫумăр нумай ҫуман-тăр, пӳрт кĕтессинчи бакра шыв хутшăнман. Ҫĕрле килнĕ шухăшсем: сутмалли чăваш юмахĕсем кĕнеки кăлармалла, юмахри япаласене малтан, кайран пĕлтерĕшри япаласене ӳкермелле.

Эпĕ Курск обл. Первомайское ятлă ялта пирĕн танк корпусăн штабĕ тăнă чухне мунча кĕнĕччĕ, мунча хуҫи Матвеев Николай чăвашчĕ, **Шелепи ялĕсем.** Ăна Полубояров генерал «За отвагу» медаль панăччĕ. Шелепи Аксу районĕнче Кивĕ Усел ялĕнче ҫуралнă. Манпа тĕл пулсан, яка мăйăхлă чăваш: «Эпĕ Кивĕ Уселсем, Шелепи ялĕсем», — терĕ.

**Шултăра.** Шултăра ҫын. Ах, аттеҫĕм-аннеҫĕм, урҫа укҫа шултăра сума лайăх терĕр-им!

Шăла пулă — судак.

...Паян манăн йывăҫ пахчинче те саркайăкăн, те уйăпăн сасси илтĕнсе кайрĕ. Вĕсем яла кĕр енне анчах килекенччĕ.

Эпиграф: Тĕвик-тĕвик текерлĕк, ăҫта каян, текерлĕк? «Ҫул» роман валли:

Мучисен сухалĕсене те, хĕрарăмсен ҫивĕчĕсене те касасси ҫинчен вĕчĕлти сăмах ҫӳрет. Пĕри ҫак яла килсе кайнă, самани Петĕр патша чухнехи пек пырать тенĕ, хĕрарăмсене хĕстерме саккун ҫук тенĕ, бунттă тăвăр тенĕ. Лешсем вара кĕпе аркисене ҫĕклесе кăтартнă: ку тенĕ, халăх калашле, карапа ҫăтнă, сана та ҫăтса ярĕ тенĕ.

**9.** Лăпкă ир. Хĕвел хĕрелсе тухать, халĕ тӳпе варринче уйăх шупка. Хĕвел ăна хăй ҫуттине памасть, вăл ирхине хăй хуҫа. Эпĕ пилĕк сехет ҫурăра тăнă.

Эпĕ ватăлнăҫемĕн каялла таврăннă. Чăн ҫамрăк вăхăта, таҫти инҫетри ачалăха. Малашлăхра мар, унта манăн поэзи.

**Суйлах чирлĕ** — мнимый больной.

**Суйлаш** — говорить сам с собой.

Чакакăн пĕр сăвă, ухмахăн пĕр сукмак.

Сукмаклă ҫын — желание исполнить свое решение, не считаясь с обстоятельствами.

Питĕ сахал ҫыртăм. Ольга Молдавирен килсе ҫитрĕ, ҫырусем илсе килнĕ. 1. Редакция «Вопросы литературы». 2. Слакбаш. 3. Бижбулякская райгазета. 4. Охрана авторских прав. Редакция журнала «Вопросы литературы» просит незамедлительно прислать статью о Некрасове.

**13.** Хĕвел тин хĕп-хĕрлĕ те ҫап-ҫаврака тухрĕ, ял хурамисем хушшинче касăлса тăчĕ. Ялта хура кураксем вăраннă, кар-карлатни илтĕнсе тăрать. Хĕрачасемпе ĕнер чие татрăм, йывăҫсем ҫӳлĕ тăрăллă. Ачасем манăн иккĕшĕ те ĕҫчен.

Паян эрнекун иккен, эпĕ темле май пĕр талăка сиктерсе янă. Паян манăн питĕ паллă дата — пĕр уйăх пĕр тумлам та эрех сыпса курман, ĕҫленĕ анчах.

**14.** Эпĕ хĕвел ҫутă чухне ҫывăрма выртнăччĕ, вăранса кайсан уйăх ҫап ҫутăччĕ, Пушкин каланă пек:

Месяц светит. Ночь ясна.
Чарка выпита до дна.

Каллех Некрасов ҫинчен статья.

Паян шăматкун. Ҫанталăк, эпĕ ĕҫлеме ларсанах, пĕлĕтленчĕ.

**Письмо к Дмитриевой**

Я из-за своей любви к Некрасову намарал кучу бумаги, этот сумбур бросал в печку, снова и снова садился за стол, смастерил длинную статью, нарушив требование поэтов, чтобы было словам тесно, а мыслям просторно. Что делать? Давно не писал публикаций.

С извинением и уважением Я. Ухсай.

**16.** Хĕвел тухиччен тăтăм, сывлăм ӳкнĕ. Курăк йĕп-йĕпе. Ҫичĕ кун хушши халран кайнă хыҫҫăн Некрасов ҫинчен ҫырса пĕтертĕм. Усси пулĕши? Ку вăхăтра эпĕ поэма ҫырса пĕтерме пултараттăм.

**17.** «Ĕпхӳ» сăвă — 120 йĕрке.

**18.** Эпĕ паттăр мар-и? Ирхине siksе тăтăм та «Раздумье» статья 21 стр. кăнтăрла тĕлне ҫырса пĕтертĕм, «Вопросы литературы» журнал редакцине ятăм. Пĕртакҫă ывăнтăм пулас, пӳрнесем те ыратаҫҫĕ.

Утăшăн Сархук Кули арăмĕ 20 тенкĕ тӳлерĕ. Эрех хакĕпе шутласан, ку хак ниме те тăмасть. Ҫапах та ял халăхĕ ĕҫет, патшалăха ахалех укҫа парать, хăйне хăй ҫаратать.

**19.** Тĕттĕм. Ĕҫлеме тапраниччен Ашмарин словарьне пăхса ларатăп, кирлĕ сăмах ҫаврăнăшĕсене шыратăп. Мăйăр. Кедр мăйри темен иккен ĕлĕк чăвашсем. Вĕт мăйăр, вĕтĕ мăйăр йăваҫҫи, хĕр мăйри.

**Мăйăрлăх,** мăйăр курланки.

Йĕкĕр мăйăр пек ӳсрĕмĕр. Паян сăвă ҫырмалла.

**Лайăх сăмах:** Вăкăр мăйракипе ҫĕр чавать те, тăпри хăй ҫине ӳкет. Текерлĕк мăйраки.

**Кивĕ пукан мăйтаки** мăйтăк тăвать.

Приемник ҫаврăнă май аран вăхăта пĕлтĕм. Икĕ сехет. Апла эпĕ вуникĕ сехетре сиксе тăнă пулĕ. Ĕлĕк улттăра, каярах тăваттăра тăраттăм. Халĕ ĕнтĕ ҫурҫĕр тĕлĕнчех вăранма тытăнтăм.

40 йĕрке ҫырсан, чей ĕҫсе булкă ҫисен, эпĕ сакăр сехетчен ҫывăрнă. Тулта сивĕ ҫил. Паян Спас кунĕ. Ҫанталăк сивве сулăнать. Поэзи тĕнчине пĕтĕмпе путрăм, тĕлĕкре те сăвăсем ҫыратăп.

**20.** Пилĕк сехетре тăтăм. Сивĕ. Сывлăм ӳкнĕ. Каҫхине **«Тĕлĕк» поэма** пирки шухăшласа выртрăм. Талвир Гавриил архангела эрех ĕҫтерсе рая пырса кĕнĕ. Пĕр шуйттан — те капитан, те майор — ăна илме килчĕ, унпа

пĕрле пĕчĕк шуйттансем-кăчăрмисем. Шелепи райра: Кунта, тет, халĕ Чулкаç пур, райри хаçат редакцийĕнче ĕçлет, канăç памасть, ман çинчен статья çырса кăларчĕ тет.

**21.** ...Вунтăваттă çапсан, Атăл пăрĕ каять. Атăл хĕрринче пĕлĕт кăвакарсан, тăман пулать теççĕ. Атăл хухсассăн (чаксан), тырă акма пĕлес пулать.

**Атăл урлă каçсан, ăс кĕрет.** Атăл хĕррине çитмесĕр, аттуна ан хыв теççĕ. Атăла курмасăр, аттуна ан хыв! **Хур хыççăн чăхă Атăл урлă каçаймĕ.**

Атăл урлă лăпсăр-лапсăр упа каçать (утă çуни).

Кăвак Атăл хĕрри кăвак йĕтĕн, Шуратăл хĕрри **шурă йĕтĕн.**

Чистай Атăлĕ — **Кама.**

**22.** Виçĕ сехетре тăтăм. Сывă те паттăр пек, тапак туртнă пирки ӳслĕк, пыр тĕпĕ те кăшт ыратать.

**Ача-пăча шутлама вĕренни.** Пĕр пĕрел, ик икел, виç виçел, тăват тăваш, пилĕк пилеш, ултă улма, çичĕ çилме, сакăр салма, тăхăр тăлма, вун тăваçми.

Примечание **проф. Н. И. Ашмарина:** Детский счет, основанный на аллитерации.

Библиотекăра ĕçлекен Костя Минкĕш çыннипе килсе тухрĕ. Вĕсем ним çукран нимĕр туса калаçса ларнă пирки вăхăт иртрĕ.

**23. Халăх сăмахĕ:** Теприн çи-пуçĕ тем пек йăлтăркка, анчах ун ăшчиккине кĕрсе пăхсан, мĕн курăн?

Паян, çанталăк сулхăн пулсан та, хура кураксемпе чавкасем пахчана тапăнсан та, ĕç ăнса пырать. 12 сехет тĕлне 84 йĕрке çыртăм. Ман ачасем халĕ те çывăраççĕ. Пилĕк сехетчен анчах ĕçлерĕм. **142 йĕрке çыртăм.** Паян каçхине, тĕттĕм пулсан ĕçленĕрен, эпĕ те хăвăрт выртмарăм, «Вăта касри инкесен пир çаппи» сăвва малалла çыртăм — **28 йĕрке.**

**25.** Çĕрле, вуникĕ сехет те иртсе кайрĕ-тăр, çывăраймарăм, ултă сехет çурăра тăтăм. Ир ялтăракан хĕвеллĕ, анчах сивĕ. «Ĕпхӳ» поэма вăрăма кайрĕ. Кĕскен çырма мантăм-ши?

Ольга Шупашкара каять: хăйĕн хуньамăшĕ плащ илсе пама укçа кучармалла тет. Вуникĕ сехет тĕлне ĕнерхинчен сахал, пĕтĕмпе те **54 йĕрке.**

Юрату пĕринчен теприне куçса пырсан, е хĕр алран алла куçса çӳресен — пархатар çук.

**26.** Эпĕ кăçал Михайловское ялĕнчен хур тĕкĕ илсе килнĕччĕ. Кĕркунне çитмен-ха, кунтан хуркайăксем иртмеççĕ, анчах сăвă йĕркисем аса килеççĕ. Гусей крикливых караван тянулся к югу.

### Хур тĕкĕ

Ираклий Андроников мана
Юри çыру çырса чĕнсен,
Мускав йыхравĕ ман чуна
Тӳпе патнех пек çĕклесен,
Нумай писательпе пĕрле
Курса-пăхса çӳремелле
Телейĕм ман ума килсен,
Эп пултăм çуркунне кăçал
Михайловское ялĕнче,
Çĕр çул та каярах авал
Поэт çӳренĕ çĕрсенче.

Карач ялĕнче çурçĕр иртсен, илĕм-тилĕм тăракансем эпĕ те манăн чӳрече тăрринчи хăма хушшинче хăйсен йăвинче пурăнакан çерçи амипе аçи анчах. Çерçисем чим! чим! — теççĕ, эпĕ пур, — çырас тетĕп. Çынсем

пурте ыйăх чăптине çапаççĕ, лавккаранултшар килограмм çăкăр илеççĕ кунсерен сыснасем валли. Хăйсем те сысналла пурăнаççĕ, пурин те пĕр шухăш, пĕр ĕмĕт: укçа та хырăм, хырăм та укçа. Вĕсем ман кĕнекене вуламаççĕ, çырнăшăн укçа илсе тăнине анчах пĕлеççĕ.

**Халăх сăмахĕ**

Ашшĕ-амăшне, ырă тăвансене хисеплеменшĕн çĕр çăттăр!

**Çĕлен эрни.** Преображение хыçĕнчен килекен эрнене çĕлен эрни теççĕ. Çĕлен эрнинче ыраш аксан, ăнать теççĕ.

**27.** «Пир çаппи» сăвва тахçантанпа çыркалаттăм, паян пĕтерсе, çĕнĕрен 98 йĕрке çыртăм.

«Хура кураксене» 1959 çултах çырнăччĕ, çĕнĕрен çырма тытăнтăм.

Эпĕ вуникĕ сехет тĕлне рекорда пырса çитнĕ — 247 йĕрке. Кăнтăрла пĕр виçĕ сехете яхăн тутлă çывăрнă, хăрушă тĕлĕк курнă: амăшĕпе Лена таçта тухса кайнă пек, вĕсене самолетпа шыраса тупман пек. Эпĕ чăннипе тĕлĕкре тĕлĕк курнă. Пуç аташма тытăннă, кăштах ывăннă иккен. Паян эпĕ тĕлĕнмелле нумай çырнă — **267 йĕрке!**

Халĕ ултă сехет анчах, тĕттĕм пуласси инçе-ха.

## ОКТЯБРЬ

Паян 13-мĕш. Шупашкара кайса килнĕренпе вăхăт ахалех иртсе кайрĕ. Чирлерĕм. «Пир çаппи» сăвва машинкăпа çапрăм. Ĕç йывăр пычĕ, кĕвве кĕреймерĕ. Паян Леляпа Миша Шупашкара кайрĕç.

Çырнисене пăхса тухрăм: васканă, сапаланнă. Кун пек васкаса ĕçлеме юрамасть, вăхăт-вăхăт канмалла.

**Манăн çырмалли план**

1. Хура кураксем.
2. Текерлĕксем.
3. Чĕре.
4. 2011 çул поэтне.

Ялта пурăнма тата икĕ эрне çеç юлчĕ. **Икĕ поэмăна** çĕнĕрен пекех тӳрлетсе çырма тивет. «Пир çаппи» сăвă — каллех çĕнĕрен. Пилĕк сехет те çитет. Ыйăх çук. Сывлăх лайăх, ним те ыратмасть. Шухăшсем пĕрин хыççăн тепри килеççĕ, пĕр-пĕринпе çыхăнмаççĕ, пуçа ватмаççĕ пулин те çывăрма памаççĕ. Шупашкара кайсан эрехе ернипе сентябрь пуçламăшĕ ĕçлĕ пулмарĕ. Эх, ку шуйттан шухăшласа кăларнă эрехе! Укçана та пĕтерет, сынна та вăрçтарать, ĕçе те пĕтерет.

**16. Долгов «Константин Иванов — куçару ăсти».** «Уйрăмах, чăваш чĕлхи пек чĕлхе *çине*, революцичченех чăваш чĕлхи *çине* куçарма çăмăлăх пулман ĕнтĕ». **Ашмарин** сăмахне аса илмелле. «Синтаксис».

**17.** Ырри: çынсем пекех йĕркеллĕ çывăртăм, 10 сехетре тăтăм. Кун хĕвеллĕ, çил вĕркелет.

Вăкăр ĕçчен, ĕне ĕнерсăр.
Чăваш кĕпи улача,
Хир варринче кăн-кăвак.
Ĕçчен чăваш вăкăр пек,
Юрла-юрла ĕç тăвать.

Вл. Мурашковский, кĕнеке издательствинче ĕçлекен çын, килсе кайрĕ, Шупашкар хыпарĕсене пĕлтерчĕ. Унпа иккĕн пĕр чĕрĕк эрех ĕçрĕмĕр.

**18.** Ир-ирех пуçланнă çумăр халĕ те çăвать. Апла эппин, пылчăклă вăхăт пуçланать. Кĕр килсе çитрĕ пулас. Кун пек çумăрлă çанталăк чух эпĕ савăнсах ĕçлекенччĕ, халĕ пуç темле йывăр. Кăнтăрла çумăр чарăнчĕ,

çанталăк ăша кантармалла ăшăтрĕ. Эпĕ пур, «Кураксем» сăвăпах ларатăп. Пурнăç та кичем, çырма та кичем.

**19.** Ултă сехет çурăра тăтăм. Хире кайса çӳрерĕм, пĕтĕмпе те виçĕ кăмпа — çерем кăмпи куртăм... Паян «Хушка çăлтăр» сăвва çырса пĕтертĕм. Вăл «Кураксен» пуçламăшĕ.

**20. «Çыру» сăвă валли:** Эсĕ çăмăл машинăпа çӳренĕ чух ман ларма вырăн пулмарĕ, эпĕ Кĕлпук çинчен поэма çыртăм мунчара. Эсĕ дачăра ларнă чух эпĕ выртрăм мунча урайĕнче. Хĕллехи **çил-тăман.** Эсĕ выговорсем парса ăшă кабинетра ларнă чух çӳрерĕм эпĕ кутсăр-пуççăр çилтăманра.

И. П. Прокопьев машина ярса пачĕ. Хĕрачапа иксĕмĕр Шупашкара кайрăмăр.

**21.** Вороновский доклад тунă хыççăн чăваш писателĕсемпе агрегат заводне кайрăм, хурçă ирĕлсе тухнине куртăм. «Чăваш хурçи» епле пуçланса кайни çинчен Пилярский директор каласа пачĕ. Хăна турĕç, лайăх апат çитерчĕç. Тав-тавах ырă çынсене. Н. Е. Егоров панă хура «Волгăпа» киле — Карача çитрĕм.

**22. Çумăр.** Сутмалли юмах: Мана кĕтеççĕ, эпĕ тухатăп та тарса пытанаççĕ. Çумăр çӳпçерен тăкнă пек тăкать. Кăнтăрлахи çумăр ниме те юрамасть, çăвать те типсе каять. Иртнĕ çумăра япăх тиха пек ан хăвала. Çумăр çапса çăвать.

Кураксем кăранклата пуçласан, çумăр тухать теççĕ. Çумăрсем: çумăр, йĕпе çумăр (вăраха кайнă çумăр), ахра çумăр, тумак çумăр, йăска çумăр, хĕвеллĕ çумăр. Çумăр лаша куçĕ пек çăвать теççĕ. **Хура çумăр.** Тырра хĕртет.

***Пичете Елена УХСАЙ хатĕрленĕ***



*Силпи çăлкуçĕ*